ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН УЙРĂМ САККУНЕСЕН АКЧЕСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕ çинчен" 1999 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 12 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1999, 31 №; 2003, 53 №; 2005, 64 №; 2006, 72 №; 2007, 73 №; 2008, 77 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 86, 87 №-сем; 2012, 92, 95 №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 10 №-сем; 2014, 6 №; 2015, 5, 10 №-сем; 2016, 2, 4 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2019, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2020, çу уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ; 2021, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 5-мĕшĕ, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 6 статьян 6-мĕш пунктне çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕн татса паракан сасă правиллĕ членне Федерацин "Раççей Федерацийĕн гражданĕсен суйлав прависен тата референдума хутшăнмалли правин тĕп гарантийĕсем çинчен" саккунĕн 57 статйин 3^1-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн уйăрнă укçа-тенкĕпе суйлава хатĕрленсе ирттерес енĕпе Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕнче ĕçленĕшĕн, çак пунктăн иккĕмĕш абзацĕпе пăхса хăварнă тӳлевсемсĕр

пуçне, хушса тӳлеме (хавхалантарма) пултараççĕ. Чăваш Республикин Суйлав комиссине Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен Федерацин "Раççей Федерацийĕн гражданĕсен суйлав прависен тата референдума хутшăнмалли правин тĕп гарантийĕсем çинчен" саккунĕн 57 статйин 3^1-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн уйăрса панă укçа-тенкĕ шутĕнчен паракан хушса тӳлемелли (хавхалантармалли) укçана мĕн чухлĕ памаллине тата унăн йĕркине Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕ палăртать.";

2) 11 статьян 3-мĕш пунктĕнче иккĕмĕш предложение кăларса пăрахас;

3) 17 статьян 6-мĕш пункчĕн пĕрремĕш абзацне "тата комиссисен ĕçнехĕлне тивĕçтерме," сăмахсем хыççăн "патшалăх влаçĕн федераци органĕсен суйлавне хатĕрлесе ирттерес ĕçре пулăшу кӳме," сăмахсем хушса хурас.

2 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин референдумĕ çинчен" 2003 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 58 №; 2006, 70 №; 2007, 73 №; 2009, 82 №; 2010, 86 №; 2012, 92 № (I том); "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 10 №; 2014, 12 №; 2015, 5 №; 2016, 11 №; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2023, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ) 34 статйин 10-мĕш пунктне улшăну кĕртес, унти "Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕ е унăн йышăнăвĕ тăрăх тивĕçлĕ кĕçĕнрех комиссисем" сăмахсене "Чăваш Республикин референдумĕн комиссийĕсем" сăмахсемпе улăштарас.

3 статья

Чăваш Республикин "Вырăнти референдум тата депутата, вырăнти хăй тытăмлăхăн суйлавлă органĕн членне, вырăнти хăй тытăмлăхăн суйлавлă должноçри çыннине каялла чĕнсе илес енĕпе ирттерекен сасăлав çинчен" 2004 çулхи ака уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 2 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 59 №; 2005, 62, 65 №-сем; 2006, 69 №; 2007, 73 №; 2009, 82 №; 2010, 86 №; 2012, 92 № (I том); "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 10 №; 2014, 9, 12 №-сем; 2015, 5 №; 2016, 11 №; 2017,

3 №; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 6-мĕшĕ; 2023, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ, чӗк уйăхĕн 8-мĕшĕ) 33 статйин 7-мĕш пайне улшăну кĕртес, унти "вырăнти референдума йĕркелекен комисси е унăн йышăнăвĕ тăрăх кĕçĕнрех шайри тивĕçлĕ" сăмахсене кăларса пăрахас.

4 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ çинчен" 2006 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 9 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 67, 69 №-сем; 2007, 73 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 85, 87 №-сем; 2011, 89–91 №-сем; 2012, 92 (I том), 95 №-сем; "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 10 №; 2014, 9 №; 2015, 5 №; 2016, 4, 6 №-сем; 2017, 3 №; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 5-мĕшĕ, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ, чӗк уйăхĕн 8-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 22 статьяра:

а) 1^1-мĕш пая "туса хунă" сăмахсем хыççăн "халăх пурăнакан вырăнсенчен аякра, уйрăм вырăнта вырнаçнă çар чаçĕн территорийĕнче," сăмахсем хушса хурас, çакăн пек çырса предложени хушса хурас: "Халăх пурăнакан вырăнсенчен аякра, уйрăм вырăнта вырнаçнă çар чаçĕн территорийĕнче туса хунă суйлав участокĕнче участокри суйлав комиссине территорири суйлав комиссийĕ (территорири суйлав комиссийĕ йышăннипе – тивĕçлĕ çар чаçĕн командирĕ) çар чаçĕнчи çар служащийĕсенчен, вĕсен çемйисен членĕсенчен тата çар чаçĕ вырнаçса тăракан вырăнта пурăнакан, çав шутра участокри суйлав комиссийĕсен йышĕн резервне кĕмен ытти суйлавçăсенчен, референдума хутшăнакансенчен йĕркелет.";

ă) 2-мĕш пая "Федераци саккунĕн 27 статйин 1-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ, вĕçленет" сăмахсем хыççăн "çывăх вăхăтри суйлава ирттермелли Федераци саккунĕн 10 статйин 2-мĕш, 3-мĕш тата 7-мĕш пункчĕсемпе пăхса хăварнă сроксенче," сăмахсем хушса хурас;

2) 52 статьян 8-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕ е унăн йышăнăвĕ тăрăх кĕçĕнрех шайри тивĕçлĕ комиссисем" сăмахсене "суйлав комиссийĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

3) 73 статьян 1-мĕш пайĕнче "ирттерме палăртма май килмест" сăмахсем хыççăн "çывăх вăхăтри" сăмахсем хушса хурас, "пĕр мандатлă суйлав округĕ тăрăх суйланнă депутатăн полномочийĕсен срокĕ тухнă кунран пуçласа пĕр çулталăкран кая юлмасăр ирттермелле" сăмахсене "Федераци саккунĕн 10 статйин 3-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлав кунĕ хыççăнхи кунра е тата кăтартнă сасăлав кунĕнченхи урăх кунра Федераци саккунĕн 10 статйин 6–9-мĕш пункчĕсемпе пăхса хăварнă положенисене шута илсе ирттерме палăртаççĕ" сăмахсемпе улăштарас.

5 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕ
104 №